# ВЕРЕ-ÇĔЛЕН.

Въ пересказѣ М. Д.

**На чувашскомъ языкѣ.**

Цѣна 5 коп.

КАЗАНЬ.
Центральная Типографія.
1912.

# Вĕре-çĕлен. (Йумах).

## I.

Инçех те мар, çывăх мар
Ĕлĕк авал пĕр çĕрте
Пĕр улпутăн парма-ҭар
Икĕ хĕрĕ ӳснĕ тет.
Çав улпутăн пĕр хĕрĕ
Каҭҭа-мĕне тухмасăр,
(Мĕн тăвас, тен, инкеке).
Ывăл-аҭа çуратат̆.
Ашшĕ çавна пĕлет те
Нимĕн тума аптăрат̆.
Шухăшласа илет те
Пысăк шăтăк çĕр айне
Ҭавтарнă та вăл унта
Хĕрпе аҭине антарса
Апат ĕмĕрлĕх парса
Шăтăк çăварне ҭулпа
Хурат̆ купалаттарса.
Çав шăтăкра хĕр аҭи

Сехетсейрен ўсет тет.
Виçĕ çула çитсессĕн
Амăшĕнҫен çўлрех тет.
Пиллĕк-ултта çитсессĕн
Аҫи калаҭ амăшне:
,,Çак шăтăкран пĕр сиксе
Çўле тухса кайам?“ тет.
Амăш çакна илтсессĕн:
,,Сиксе тухсан аван та
Анҫах пире тухмасса
Пирĕн пуçăмăр тăрне
Ҫул купаланă çав“, тет.
Униҫҫен те пулмарĕ,
Ывăл-аҫа йалт! сикрĕ
Çўле тухса палт! ўкрĕ.
Тĕттĕм çĕрте пурăнса
Вăрмансенҫен, хĕвĕлтен,
Халҫҫен тĕнҫе курманскер,
Кайăксенҫен, тыр-пултан
Пит тĕлĕнсе кайрĕ тет.
Шăтăк патне пĕшкĕнсе:
,,Мĕн йапала ку, анне?“
Ыйтаҭ аҫа тĕпҫесе.
Амăш ăна мĕн пурне
Хăй мĕн таран пĕлнипе
Ăнлантараҭ йĕррипе.
Ултă çулхи ывăлне
Йараҭ амăш вăрмана,

Кайăк тытса кил, тесе.
Те çамрăкран айванран,
Елле пĕвĕ пысăкран,
Йе çут тĕнҫе курмантан,
Улпут хĕрин ывăлĕ
Ниçта кайма хăраман.
Амăш каласассăнах
Тухрĕ кайрĕ çав аҫа,
Кайăк тытма вăрмана.
Сĕм-вăрмана çитрĕ те
Йывăç хуçса илҫĕ те
Çав йывăçпа кайăксе
Пере-пере ўкерҫĕ.
Киле илсе пырсанах
Çирĕç пĕрле пĕçерсе.
Çантан вара кулленех
Ывăл-аҫа вăрмана
Кайăк тытма çўретех.

## II.

Пĕрре аҫа вăрманта
Тарăн çырма тĕл пулаĭ
Тарăн çырма варринҫе
Прени ылттăн, çийĕ кĕмĕл
Йалтăртатса пўрт лараĭ.
Кĕрсе кайрĕ çав пўрте
Хаваслапса хаĭ аҫа,

Пĕр ҫун та ҫук ăшĕнҫе.
Пĕр шикленмесĕр аҫа
Ҫӳрет пӳртро тӳстарса.
Сентри ҫине пăхаӗ те,
Нумай пуҫлă пĕр ҫĕлен
Вырта параӗ ҫашкăрса.
Хăпăл-хапăл ҫавăрса
Йарса тытаӗ ҫĕлене.
Усал ҫĕлен ҫумĕнҫе
Темĕн ҫухлĕ ҫăраҫҫи.
Уҫăсене суйласа
Карташĕнҫи ампарсе
Уҫа-уҫа пăхаӗ тет:
Хăйне пӳлĕм сахăр тет,
Тепĕр пӳлĕм пĕремĕк,
Урăх пулĕм канхвит тет.
Пĕр пӳлĕмре пит лайăх
Пулнă тарăн тараса;
Ҫанта ҫĕлене йарса
Питĕрсе илет аҫа.
Каҫ йенелле сулăнсан
Аҫи килне таврăнсан
Мĕн курнине амăшне
Параӗ пурне каласа.
Анҫах амăш хăрасран
Ҫĕлен ҫинҫен тĕмĕншĕн
Пĕр сăмах та каламан.
Вара ҫапла калаҫсан

Ылттăн-кĕмĕл пӳрт ăшне
Амăшĕпе ывăлĕ
Кайса кĕрсе вырнаçнă.
Куллен кунах вăрмана
Кайнă аҫа кайăка.
Пĕрре пĕҫҫен йулсассăн
Карташĕнҫи ампарсе
Амăш уçса çӳренĕ.
Тарасине курсассăн,
„Шывĕ тăрă-ши?“ тесе
Пури çинҫен пĕшкĕнсе
Пăхнă амăш айала.
Шывĕ мĕнĕ курăнман,
Ĕлĕк хăйпех вылҫани
Ларать шалта пĕр каҫҫă.
„Мĕн ĕçлетĕн ес унта?“
Тесе ыйтат улпут хĕр.
„Паçăр санăн ывăлу
Мана хупса лартрĕ“, тет.
(Улпут хĕрне çыпçăнна
Вĕре-çĕлен çак каҫҫă
Хăйех пулнă мĕн амак).
„Есĕ мана хĕрхенсен
Мана кунтан кăларма
Тилкепе йе вĕрен йар“.
— „Кунтан сана кăларма
Çукçке вĕрен-тилкепем!“
— „Апла пулсан сур кунта!“

Улпут хӗрӗ сурнӑ та
Сурӑк вӗрен пулайнӑ.
Вӗре-ҫӗлен ун тӑрӑх
Йаваланса улхайнӑ.
Пӳрте пӗрле кӗнӗ те
Иккӗшӗ те выҫӑнӑ.
Пӑртак вӑхӑт иртсессӗн
Улпут хӗрӗ ывӑлӗ
Кайӑк тытса вӑрмантан
Таврӑнсӑ тет килнелле.
Вӗре-ҫӗлен курсанах:
„Вӗҫ-ав килет ывӑлу
Пире выҫӑма ҫарӑ,
Аҫа ӑна вӗлерер“, тет.
Улпут хӗрӗ итлесе
Вӗлермешкӗн ӑс ыйтаӑ.
Вӗре-ҫӗлен ӑс парӑ:
„Есӗ ывӑлу килсен
Ҫирлӗ ҫын пек пулса вырт.
Кӑштҫех, аҫам вилеттӗм,
Мӗшӗн ҫасрах килместӗн?
Халӗ есӗ кӗриҫҫен
Епӗ пӑртак тӗлӗртӗм.
Ҫав вӑхӑтра тӗлӗкре
Пӗр шур сухаллӑ старик
Мана ҫапла каларӗ:
Йар ывӑлна пуш хире;
Ҫав хирте пӗр сысна пур,

Хĕрех те пĕр çури пур.
Пĕр çурине тытсассăн
Пĕçерсе çисе пăхсассăн,
Ҫĕрĕлетĕн, терĕ, те.
Çав сыснаран ывăлу
Ҫĕрĕ йулас çук", тенĕ.
Улпут хĕрĕ итлесе
Каҫҫă курнан çĕлене
Тарасана хупнă та,
Пӳрте кĕрсе сывмара
Хывса выртнă ахлатса.
Тĕрлĕ вăрман кайăкне
Темĕн ҫухлĕ çĕклесе
Кĕҫĕ ывăлĕ пӳртне.
Амăш ҫирлине курсан:
„Тата сана мĕн пулҫĕ?"
Тесе ыйтаӳ шарт сиксе.
Вĕре-çĕлен сăмахпе
Йараӳ амăш ывăлне
Хире сысна шырама.

### III.

Пушă кире кайнă ҫух
Аҫан çулĕ хĕрринҫе
Виçĕ тăлăх-турат хĕр
Пурăнаççĕ пĕр пӳртре.
Улпут хĕрин аҫине

Сысна ăçта икенне
Кăтартнă та çак хĕрсем,
Утаť ађа малалла.
Хĕрсем татах ађана
Хуса çитсе ăс параç:
„Çав пуш хирти сыснана
Йăли йеплине пĕлме
Ес итле-ха лайăхрах:
Вăл сыснана тĕл пулсан
Вашах патне ан çывхар
Сысна сана курсанах
Хайар саспа çухăрса
Шăртне çӳле тăратĕ,
Шăрђĕ хĕрĕх хăлаç пур,
Шăрђĕ тăрса çитсенех
Калла антарма пуçлĕ.
Çапла туса çухăрса
Вăл ывăнса йăванса
Кайса укĕ çывăрма.
Сысна çывăрнă ђухне
Ĕме пуçлĕç çурисем.
Хăпăл-хапăл ђупса пыр,
Пĕр çурине çухăртсах
Килнелле ђуп хăвăртрах“.
— „Йурĕ, çапла тăвăп-ха“,
Терĕ ађа, вĕçтерђĕ.
Сысна ђăн та курсанах
Хайар саспа çухăрса

Шăртне çуле хăнартрĕ.
Унтан çĕре йăвансан
Хĕрĕх те пĕр çурисем
Ĕме пуçларĕç кăна.
Пĕр çурине хăвăртрах
Пирĕн аҫа тытаŷ те
Çухăрта та макăртах
Килне ҫупаŷ васкаса.
Сысна пĕр те туймасăр
Çывраŷ йулаŷ пуш хире.
Аҫа киле пуçласан
Вĕре-çелен хай хĕре
Хушаŷ хупма ырăнне.
Хăй каҫҫине ăсатсан
Амăш пуртре ахлатса
Выртаŷ сымара хывса.
Аҫа çитнĕ çитменех
Сысна çурине ҫиксе
Параŷ ĕнтсе пĕçерсе.
Амăш çавна çисессĕн:
„Кус-ха, аҫам, вăрмана,
Майа каймăп-и кунпа“,
Тесе йараŷ ывăлне.

IV.

Аҫи тухса кайсанах
Амăш вĕре-çĕлене

Кӳртет пӳрте ӑс ыйтма.
Ҫӗлен-каҫҫӑ вӗрентет:
„Аҫу кунта килес ҫух
Пушшех пултӑм тесе вырт“.
Каллах старик тӗлӗкре:
„Тӑвар йарса пӗҫерни
Сысна ҫури сип пулман.
Тата лараӗ ҫав хиртех
Вуник хутлӑ ҫил-арман,
Кунӗн-ҫӗрӗн аварса,
Шурӑ ҫӑнӑх кӑларса.
Пӗр апатлӑх ҫӑнӑхне
Илсе килсе ҫисессӗн
Ҫӗрӗлӗн, терӗ старик,
Аҫу армана ҫитсен,
Таврӑнаймӗ кайалла“.
Ҫапла канашласассӑн
Улпут хӗрӗ ҫӗлене
Ухатари килиҫҫен
Тарасине хушнӑ та
Ӑшӑ пӳртре ахлатса
Выртнӑ сымара хывса.
Алӑкӗнҫен кӗрсенех:
„Анне самайланатна?“
Тесе ыйтаӗ ывӑлӗ.
Вӗре-ҫӗлен хушнӑ пек
Вуник хутлӑ армантан
Ҫӑнӑх илсе килмешкӗн

Йарат̆ амăш ывăлне.
Ку амăшĕ хушсанах
Арман çинҫен пĕлмешкĕн
Кайат̆ тÿррех çулпала
Вичĕ тăлăх хĕр патне.
Хайхи хĕрсем аҫана
Вĕрентеççĕ йеплине:
,,Пушă хирти армана
Усал-тĕсел çулăхнă.
Çав çил-арманĕ патне
Çывăхара пуçласан
Темле тискер кайăксен
Тĕрлĕ сасă илтĕнет.
Ҫĕри хавшак çын пулсан
Çантах вилме хап ансат.
Анҫах есĕ ан хăра,
Куçна тем те курăнĕ,
Çапах валак тĕлĕнҫе
Çăнăх миххи тытса тăр.
Миххÿ тулса çитсессĕн
Пĕр çавăрнса пăхмасăр
Ҫупса тух та килне тар".
Çак сăмаха илтсессĕн
Улпут хĕрĕ ывăлĕ
Кайат̆ арман шырама.
Вăл темиçе çухрăмран
Асса-тĕссе сирлĕнсе
Калтăртатни илтĕнет.

Аҫа пырaҫ ҫатнерех.
Ҫӑнах арман ӑшӗнҫе
Тем сасси те илтӗнет.
Унта ҫын пек кӑшкӑрнӑ,
Сысна пек те ҫухрашнӑ,
Упа пек те ӳкӗрнӗ,
Кушак пек те макӑрнӑ.
Тата темле хӑрушӑ
Сасӑсем те илтӗннӗ.
Шикленмесӗр-тумасӑр
Аҫа кӗрет арманне,
Тултараҫ те ҫӑнӑхне
Тухса ҫупаҫ хӑй килне.
Амӑш каҫҫа ӑсатсан
Персе ҫитет хай аҫа.
Ҫӑнӑхӗнҫен йешкине
Амӑш ҫисе пӑхсанах:
„Ухатана кай, аҫам,
Майа каймӑп-и кунпа“,
Тесе йараҫ ывӑлне.

V.

Аҫи тухса кайсанах
Вӗре-ҫӗлен каҫҫине
Кӳртет пурте ӑс ыйтма.
Вӗре-ҫӗлен калaнӑ:
„Манӑн ӑна вӗлерме

Тата тепӗр емел пур.
Унтан хӑтӑлаймӑ тек.
Аҫу кунта килес ҫух
Пушшех пултӑм тесе вырт.
Хайхи старик тӗлӗкре
Акӑ ҫапла терӗ те:
Ҫав ҫав хирте кӳлӗ пур,
Ҫӗрӗлӗх шыв унта пур
Ҫавӑ шыва ӗҫсессӗн
Есӗ вара сывалӑн“.
Ҫӗлен-каҫҫа ӑсатсан
Аҫи килсе ҫитнӗ ҫух
Выртаӗ амӑш сывмар пек.
Алӑкӗнҫен кӗрсенех:
„Самайланатна апне?“
Тесе ыйтаӗ ывӑлӗ.
„Ах! ҫук, аҫам, пулмаст пуҫ,
Пушшех пула пуҫларӗ.
Тепӗр ҫӗре, ывӑлӑм,
Каллах сана йарас пуҫ
Ерне сана ҫӳресси,—
Ним тума та ҫук ӗнтӗ“.
— „Тата ӑҫта каймалла?“
— „Каллах старик курӑнҫӗ.
Ҫав ҫав хирте кӳлӗ пур,
Ҫӗрӗлӗх шыв унта пур.
Кӳлри шыва ӗҫсессӗн
Есӗ ҫӗрӗлӗн“ терӗ.

— „Йурĕ, анне, кайăп“, тет.
Аҫа тухса кайсанах
Каллах вĕре-ҫĕлене
Амăш пӳрте кӳртет те
Иккĕшĕ те ывăлне,
Пурĕ пĕр вилет тесе
Тĕпĕртетсе ҫӳренĕ.
Кӳл кăҫтине пĕлесшĕн
Утаҫ тӳррех хай аҫа
Виҫĕ тăлăх хĕр патне.
Темиҫе хут пынипе
Йăлт паллашса ҫитнипе
Тăлăх хĕрсемшĕн аҫа
Килти пекех туйăннă.
Нихҫан ăшри шухăша
Пĕр пĕринҫен пытарман
Хăруш ҫула тантăша
Вĕсем йараспăн Ӳулман:
„Мĕшĕн анну йаланах
„Сана капла хăвалаҫ?
Вĕлерессĕн-им апла?
Асту, хăна ху сыхла.
Ес кайакан кӳл тавра
Тытнă тимĕр решетке.
Пысăк ҫĕлен шал йенҫе
Йавалансаҫеҫ выртаҫ.
Ун патĕнҫен нихăш те
Халҫен ҫĕрĕ тухни ҫук.

Вăл çĕлене курсассăн
Сан пуçу та йулас çук“.
Йĕкĕт пĕр те хăрамасӗ:
„Анне хушса йарсассăн
Итлемесĕр хăвармасп“.
Вара хĕрсем калаҥ:
„Çĕлен карти тĕреклĕ,
Çуран каçса кĕрес çук.
Çил çунатлă лашана
Парса йарăпăр сана.
Çав çĕленрен сыхланма
Хĕç-пăшал та çакса кай“
Лаши çине утлансан
Хĕçпе пăшалне çаксан
Йĕре-йĕре ăсатса
Йараç виç хĕр аҫана.
Пĕр самантра кӳл патне.
Çитсе тăнă хай аҫа.
Лаши çинҫен аннă та
Кĕме пăхса çӳренĕ.
Йĕри тавра кӳлĕре
Тем тăрăшшĕ каска пек
Пысăк çĕлен çилхеллĕ.
Йаваланса вырташ тет.
Çĕлен çилхине хыçса
Пĕр хĕр тăраҥ хуйхăрса.
Вăл аҫана курсанах:
„Ах! аҫам ес кунта

Пуҫна ҫиме килтĕнем?
Еп те улпут хĕрĕ-ҫĕ,
Ĕнтĕ ҫиҫ ҫул ҫакăнне
Хыҫса лараҭ ҫилхине“.
Кăна аҫа илтсессĕн
Шухăшласа тăнă та
Хĕҫĕ вĕҫне ҫĕлĕкне
Тăхăнтарса ҫавлатса
Палтăр-палтăр ҫавăрнă.
Темĕн ҫухлĕ ҫавкасем
Ҫавăрнипе пуҫтарнă.
Пĕр ҫавкинĕ тытнă та
Панă хĕре каласа,
„Ҫилхи ҫумне ҫых“, тесе.
Ҫавки пăр май ҫăрмалаҭ,
Ҫунаҫсемпе ҫапкалаҭ.
Шыври пысăк ҫĕлене
Хĕр хыҫнă пек туйăнаҭ.
Пĕр самантра хай аҫа
Ҫил ҫунатлă лашине
Карти урлă сиктерет.
Лаши ҫинҫен анаҭ те
Ҫĕлен урлă витрепе
Сиксе каҫса шыв ăсаҭ,
Хĕре йарса тытаҭ те
Ҫĕлен урлă каҫарса
Лаши ҫине иккĕш те
Ларҫĕҫ лайăх утланса.

Карт́и урлă сикнĕ ђух
Тимĕр решетке çумне
Лаши ури лекрĕ те,
Сасси кайрĕ ўкĕрсе,
Калăн, пысăк ђан тесе.
Çĕлен сиксе тăраŤ те
Калле-малле пăхкалаŤ.
Йуланута курсассăн
Ђупрĕ кăсен хыçĕнђен.
Çил çунатлă урхамах
Вăшăл-вашăл вĕçтерет.
Çĕлен кăсен патнелле
Çитех пыраŤ ђашкăрса.
Çĕлен çилли ўкнипе
Хĕрĕн пуçĕ ыратаŤ.
Ыратнипе кăшкăрса:
„Пурĕ пĕрех вилмелле,
Хăвар мана пăрахса!“
ЙăлăнаŤ хĕр ађана.
Ăна-кăна пăхмасăр
ПыраŤ ађа сиктерсе.
Çĕлен ăшĕ пиçнипе
Выртса йулђĕ тăсăлса.
Вара кăсем лашине
Хавасланса уттарса
Сывлаттарса пыраççĕ.
Хăйсен шывĕ витрине
Çурри йулман тăкăнса.

Виçĕ тăлăх хĕр патне
Çитсе кĕҫĕç уттарса.
Çил çунатлă лашине
Хуҫĕç тула кăкарса.
Тăлăх хĕрсем савăнса
Хăна турĕç кăçене.
Унтан пăртак витререн
Кĕленҫепе тултарса
Шывне хуҫĕç сых йатне.
Ĕççе çисе тăрансан
Аҫа амăшĕ патне
Кайас тийе пуçларĕ.
Çĕлен панҫен хăтăлнă
Хĕре илсе йулаççĕ
Тăлăх хĕрсем хăй патне.
Аҫи пыра пуçласан
Вĕре-çĕлен амăшне
Каларĕ тет тĕлĕнсе:
„Каллах килет ав аҫу
Ĕнтĕ ăна вĕлерме
Урăх мелĕм çук“, тенĕ.
Вĕре-çĕлен тухсанах
Аҫа çитсе кĕнĕ те
Вырăн çинҫи амăшне
Ҫĕрĕлех шыв ĕçтернĕ.
Çавна ĕççе пăхсанах
Амăш шутсăр вăй илнĕ.
Аҫи çумне ларнă та:

„Нӳ, ывӑлӑм, пит маттур.
Ӑҫти ҫӗре ҫитмерӗн,
Вӑй та санӑн нумай пулђ!“
Тесе мухтаť ывӑлне.
Ађи вӑйне сӑнама
Тимӗр пралук илнӗ те
Ҫыхса хунӑ ывӑлне
Йуман ҫумне вӑрмана.
Тапаланса пӑхнӑ та
Ађи татнӑ пралукне.
Лум пысӑккӑш пралукпа
Ҫыхса хурсан хай ађа
Тапаланнӑ, тапаланнӑ
Нимӗнпе те татайман.
Амӑш вара савӑнса
Вӗре-ҫӗлене ђенсе:
„Акӑ, хайхи тин лекрӗ!
Улӑм хушӑк илсе кил,
Йарӑпӑр, тет, вут тӗртсе“.
Кӑмрӑкланса кайсассӑн
Вӗре-ҫӗлен ађана
Кусне ђышса шӑтарса
Леҫсе йанӑ ҫырмана.
„Лекрӗ хайхи тин!“ тесе
Йурласа та ташласа
Праҫник турӗҫ савӑнса....

VI.

Нумай вӑхӑт иртсессӗн,

Ăнĕ-пуçĕ кĕрсессĕн,
Суккăр пулнă хай аҫа
Ниçта кайма пĕлеймен.
Урапа сасси хыçĕнҫен
Ҫупса пырать кăшкăрса.
Урапа çинҫи икĕ çын,
Ку кăшкăрса пынăран
Ҫарса ыйтаççĕ кунтан:
„Есĕ кăçта кайатăн?"
Лешĕ калаçса тăман,
Ыйтса пĕлҫĕ çуран-çул.
Çулĕ тăвăр, тап-такăр
Тарăн курăк хĕррипе
Хай тăватă хĕр патне
Тўррех тухать çав аҫа.
Аҫа пынă çул çинҫе
Ыталашса йурласа
Çўреççĕ мĕн ку хĕрсем.
Çак аҫана курсассăн
Харăс кăшкăрса йарса
Пур те ҫупаç хăраса.
Аҫа сасă парсассăн
Ҫарăнаççĕ палласа.
„Мĕшĕн капла тумланса
Çўрет пире хăратса
Хамăр пĕлекен аҫа?"
Тесе пыраç умнелле.
Çуннă ўте курсассăн:

„Тата сана мӗн пулҫӗ?“
Шартах siксе ыйтаҫҫӗ.
Тӗпӗ-йӗрпе каласа
Параҫ аҫа хӗрсене.
„Акӑ ӗнтӗ куртӑна?
Аннӳ сана мӗн турӗ!
Епир сана тахҫанах
Каларӑмӑр сыхланма.
Сана йепле ҫын тӑвас?
Йепле ӗнтӗ тӳрлетес?
Тесе йӗреҫ шеллесе
Тӑватӑ хӗр уласа.
Унтан пӗри астуса:
„Пӑркун хӑварнӑ шыва
Сӗрсе пӑхсан мӗн пулӗ?“
— „Ҫӑнах сӗрсе пӑхар-ха!“
Шывне илсе тухнӑ та
Аҫан ҫуннӑ ҫурӑмне
Шывӗ лекнӗ лекменех
Хури кӑпӑл хӑпӑнса
Ҫӗнрен тухнӑ ҫутӑ ӳт.
Ҫаҫна курсан савӑнса
Пур ҫан-ҫурӑмне сӗрсен
Урӑхланҫӗ хай аҫа.
Пӑртак шывне ӗҫтерсен,
Куҫӗсене те сӗрсен
Ӗлӗкхинҫен те маттур
Аҫа пулнӑ тӑнӑ тет.

Хĕрсем ăна ҫавăнса
Апат кӳртсе ҫитернӗ.
Апат ҫисе тăрансан,
Калаҫ улпут хĕр аҫи:
„Вĕсем мана ҫунтарҫĕҫ.
Хăйсене те тавăрам!
Аҫăр кайар хăвăртрах.
Тăватсăр-та кĕрсенех,
Йарса тытăр аннене,
Хам пушкарăп ҫĕлене“.
Вара ҫасрах васкаса
Ҫил ҫунатлă лашине
Илсе тухса панă та,
Аҫи сиксе утланнă.
Пур те карĕҫ тет тухса
Аҫи килне шавласа.
Вĕсем ҫитнĕ вăхăтра
Вĕре-ҫĕлен амăшпе
Тĕпĕртетсе выҫаса
Ахăлтатса ҫӳренĕ.
Пиллĕкĕш те сасартăк
Пырса кĕҫĕҫ тет пӳрте.
Лешсем курсан хăраса
Хытса кайнă йупа пек.
Йарса тытрĕҫ ҫавăрса
Тăватă хĕр амăшне.
Аҫи хĕҫпе вакласа
Сĕл пек турĕ ҫĕлене,

Тула илсе тухнă та
Вут тивертсе çунтарнă;
Унтан кĕлне салатсан,
Пӳрте кĕрсе амăшне:
„Анне, мана çунтартăн,
Халĕ сана мĕн тăвам?“
Тесе тытаҫ ывăлĕ.
Амăш ҫиксĕр хăраса
Пĕр сăмах та ҫĕнеймесҫ.
Илсе тухаҫ вăрмана.
Пысăк ҫĕрĕ йумана
Авса çыхаҫ пекĕ пек.
Амăш хăрах урине
Çыхса хураҫ тăррине.
Авса çыхнă вĕрене
Касаҫ татаҫ хĕçĕпе.
Йуман тăрри уласа
Ухса кайрĕ ырăнне.
Амăш кайрĕ ывтăнса
Таçти патшалăх çĕрне.
Хăрах ури çакăнса
Йулҫĕ йуман тăррине.
Вĕре-çĕлен çунсассăн,
Амăшĕ те пĕтсессĕн
Хăй хăтарнă хĕрпеле
Мăшăрланҫĕ çав аҫа.
Халь те пулин телейлĕ.
Пурăнаççĕ тет вĕсем.

Йумах йатăм йуптарса
Есир итлерĕр ларса.
Акă çакна куртăра?
Ултă сыпăк йумахра:
I. Хĕрпе-аҫи шăтăкра.
II. Вĕре-çĕлен çуртĕнҫе.
III. Пуш-хирти сысна çури.
IV. Вуник хутлă çил-арман.
V. Кӳлри ҫĕрĕлĕх-шывĕ.
VI. Ывăл-аҫа тавăрни.

Въ пересказѣ **М. Д.**

---

**Кайран калани.** Пĕр-пĕр мăшăрне çухатнă арçын йе хĕр-арăм пит хуйхăрса пăсăлсан куçне темĕн те пĕр курăнма пултарать. Хресҫен халăхĕ ун пеккине вĕре-çĕлен çынçăнна теççĕ. Хăшĕ пĕри: «Пĕлет çинҫен вутлă çĕлен çавăн пӳрҫĕ тĕлне вĕçсе йарăнса аннине хам куçпа хам куртăм», тийекен те пур. Анҫах апла пĕлменнипе калаççĕ. Тĕнҫере пĕлĕт çинҫе пысăк ҫул катăкĕсем вĕçсе çӳреççĕ. Çĕр йĕри тавăра тăракан сывлăша вирлĕн сĕртĕннипе ҫул хĕрсе çап-çутă çĕлен вĕçнĕ пек курăнать. Ун пек ҫулсене пĕҫĕкреххисене «ӳкекен çăлтăр», пысăкраххисене «метеор», йе «болиды» теççĕ. Çак кĕнекери йумах та çавăнтан тухнă пулмалла.

---